Порфирий Афанасьев

## Чăваш çĕршывĕ

Çĕршывăмçăм! Ак эсĕ ман умра!
Çулталăк мар, пĕр уйăх та иртмерĕ,–
Ярăнтарать каллех Çавал кĕперĕ,
Картин-картин чупса тухать йăмра.

Хушпу тенки пек йывăр хăмлупа,
Мана курса, хаваслăн ал çупатăн,
Пит-куçăма çăл шывĕпе çăватăн
Аваллăхран пыран ыр йăлупа.

Çуртсен çамки – çут ĕнчĕ те ахах.
Вилмест юмах! Пурнать юмах паян та,
Çынсем çине шăтарарах пăхан та –
Кашнийĕнче Кĕлпук мучи пурах.

Çĕршывăмçăм! Çатма пек такăр çул
Чупать – ку тейĕн аслă юн тымарĕ,
Ума тухать Тăвайĕ те Вăрмарĕ,
Ашра юлать сăпайлă калаçу.

Ĕççи çинчен, туйсем çинчен. Кĕрхи
Тулли пӳлме çинчен калать-и халăх –
Туятăп эпĕ: пур ун савăнмалăх.
Мĕнле-ха урăхла? Çапла йĕрки!

Пилеш вучахĕ. Хурăнсен ташши.
Тӳпен пĕр тĕпсĕр авăрлă сенкерĕ...
Эп килтĕм те – эс мĕн кăна сĕнмерĕн,
Чăваш çĕршывĕ – чун-чĕре ăшши.

Эп манас çук сан ырă кăмăлна.
Сан пилӳпе ялан эп пулнă сывă,
Апла пулсассăн, ман Тăван çĕршывăм,
Иккĕленмесĕр эс те шан мана!

*Афанасьев, П. Чăваш çĕршывĕ : сăвă / П. Афанасьев // Чун çути / П. Афанасьев. – Шупашкар, 1980. – С. 11-12.*